Партисен пурнăçĕнчен

# Пĕрле пулсан ыйтусене татса пама çăмăлрах

***Октябрĕн 15-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Муркаш районĕнчи вырăнти уйрăмĕн конференцийĕ иртрĕ. Ăна политика канашĕн секретарĕ А.Н. Иванов уçрĕ.***

***Конференцире «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн политика канашĕн членĕсен шутне улшăнусем кĕртесси, вырăнти контрольпе ревизи комиссийĕн положенийĕ, Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн 14-мĕш конференцине делегатсем суйласси пирки ыйтусем сӳтсе явăрăç. Делегатсем пулма вара район администрацийĕн пуçлăхне Юрий Александрович Иванова тата «Ударник» хуçалăх ертӳçине Платон Павлович Давыдова суйларĕç.***

***Конференци хăйĕн ĕçне вĕçленĕ май «Единая Россия» партин вырăнти политканашĕн секретарĕпе А.Н. ИВАНОВПА тĕл пулса хальхи вăхăтра тĕрлĕ шайра анлăн сӳтсе явакан ыйтăва хускатмасăр пултараймарăм.***

**– Альберт Николаевич, пĕрремĕш ыйту «Единая Россия» тата Аграри партийĕсене пĕрлештересси пиркиех.**

– Тавлашмалли кунта çук тесе шутлатăп: пĕрлехи вăйсемпе кăна ял хуçалăхĕнчи паянхи пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене ăнăçлă татса пама пулать. Тепĕр ыйту вара – аграри ыйтăвĕсем ытти проблемăсем хушшинче манăça ан юлччăр. Çавăнпа та политканаш йышĕнче тата пуçламăш уйрăмсенче вĕсене тивĕçлипе çирĕплетмелле тесе шутлатăп.

Эпир пĕлетпĕр: республикăра та, районта та Аграри партийĕн членĕсен авторитечĕ пĕчĕк пулман. Вĕсен ретĕнче ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем, специалистсем, производствăра малта пыракансем. Секретарĕн, пуçламăш организацин активĕн çитес кунсенчи тĕп задачи – аграри партийĕн членĕсемпе тĕл пулса ăнлантару ĕçне туса ирттересси, вĕсенчен «Единая Россия» парти ретне кĕме заявленисем пухасси. Ку ĕçе вара аграрисемпе тачă çыхăнса, вĕсем хутшăннипе туса ирттермелле. Çак ĕçе ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вĕçлес пулать.

Пирĕн политканашăн аграрисемпе тачă çыхăнса ĕçлессине çирĕплетмелли тепĕр май вăл – политканаш секретарĕн аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен çумĕн должноçне туса хурасси. Ку должноçе вара аграри партийĕнчен чăннипех те тивĕçлĕ çынна, опытлă ĕçчене суйларăмăр – Платон Павлович Давыдова. Вăл районта Аграри партийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пынă. Халĕ вара вăл «Единая Россия» парти членĕ. Конференци те ăна политканаш секретарĕн çумĕ пулма суйласа тĕрĕс турĕ.

**– Икĕ парти пĕрлешессин тĕп задачисем тесе мĕнлисене палăртнă пулăттăр?**

– Чи малтанах ял хуçалăх ыйтăвĕсене татса пама майсем ытларах пулĕç. Ыйтăвĕсем вара, чăннипе палăртсан, сахалах мар.

Кунсăр пуçне вара пĕрлешни çĕнĕ политика условийĕсенче аграрисен программа палăртăвĕсене пурнăçа кĕртмелли мел пулса тăрать. Ведомство мелĕпе, производство енĕпе йĕркеленнĕ партисен вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ хальхи вăхăтра пысăках мар, вĕсем палăртакан задачăсене татса парасси те иккĕленӳллĕ.

Купна пĕрлех çакна та палăртса хăвармалла. Вырăнти влаç органĕсене депутатсем суйлас вăхăт çитиччен вăйсене пĕрлештерни кирлĕ. Çакă вырăнти самоуправлени органĕн влаçĕнче ытларах вырăн çĕнсе илме май парĕ.

**– Апла пулсан, пулас суйлавсем пирки сăмахăмăра тăснă пулăттăм.**

– Çакă паллă: çитес суйлавсенче районти тата вырăнти шайра та депутатсене партисенчен суйлĕç. Вăл шутра «Единая Россия» партирен те. Çавăнпа та çывăх вăхăтрах,

тĕрĕссипе ноябрь уйăхĕ çитичченех, «Единая Россия» партирен депутата тăратакан кандидатсен резервне хатĕрлемелле. Пулас депутатсем парти ретĕнче пулмасан пире вĕсене çитес суйлавра депутат пулма кандидата тăратма май килмĕ.

Çавăнпа та партие илессипе пысăк тимлĕх пулмалла. Хальхи вăхăтра парти членне ансатрах йĕркепе кĕме май пур. Ноябрĕн 20-мĕшĕнчи съезд хыççăн вара çĕнĕ Устав вăя кĕрет, унта кандидат стажĕ тата рекомендацисем пухасси пирки те каланисем пур.

Уйрăмах пысăк тимлĕх – аграри партийĕсен членĕсем тĕлĕшĕпе. Паянхи куна вĕсенчен 60 заявлени ытларах килнĕ. Кашнинпех вĕсемпе уйрăммăн тĕл пулмалла. Халиччен Аграри партийĕнче пулнă вăхăта «Единая Россия» парти майлисен пулнин шутне кĕртеççĕ.

**– Вырăнти пуçламăш организаци умне тухса тăракан задачăсем пирки мĕн калас тетĕр?**

– Пирĕн задача – производствăпа экономикăна аталантарас тĕлĕшпе тунă йышăнусене пурнăçа кĕртессишĕн влаç органĕсемпе алла-аллăн тытăнса ĕçлесси. Çакна калама

кăна çăмăл, мĕн палăртнине пурнăçа кĕртме вара самай йывăртарах.

**– Сирĕн парти – власть партийĕ. Çавна май умри задачăсемпе тĕллевсем тĕлĕшпе те вăхăт иртнĕ май улшăнусем кĕртме тивĕ?**

– Влаç партийĕ пулса тăнă май пирĕн задачăсем шутĕнче çĕр-шыв пуçлăхĕсем производствăпа экономикăна аталантарас, социаллă ыйтусене татса парас тĕлĕшпе кăра çилĕллĕ пулнăшăн ĕçрен хăтарнă.

1933 – 1939 çулсенче шкул директорĕнче Кузьма Константинович Константинов вăй хунă. Унпа пĕрлех çав çулсенче Павел Николаев тата Порфирий Шарапов та ĕçленĕ. Вăрçă пуçланичченех 1940 – 1941 çулсенче ку шкула Гурий Трофимов ертсе пынă. Вăл хăй Оринин ялĕнче çуралнăскер пулнă. Унăн хĕрĕ Розета ял Советĕнче нумай çул хушши бухгалтерта ĕçленĕ.

Г.Т. Трофимов ертсе пынипе Алексей Михайлов, Иван Наганов, Иван Казаков учительсем тăрăшнă. Вăрçă çулĕсенче çăмăл пулман. Электроэнерги те пур чухне çитмен. Апла пулин те вĕсем çитĕнекен ăрăва воспитани парассипе хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тунă.

Вăрçăн йывăр 1942 – 1945 çулĕсенче тата вăрçă хыççăнхи 1945 – 1948 çулсенче Атапай шкулне Мария Тимофеевна Тимофеева ертсе пынă.

1948 – 1949 вĕренӳ çулĕнче шкул директорĕнче Василий Степанович Львов ĕçлеме тытăннă. Унпа пĕрлех Ярапайкасси ялĕнчи Евдокия Максимовна Смирнова тата Кашмаш ялĕнчи Вера Ильинична Егорова та тăрăшнă.

1950 çулхи августăн 15-мĕшĕнче Атапайĕнче 7 çул вĕренмелли шкул йĕркеленĕ. Унăн директорĕ пулма Герман Артемьевич Артемьева шаннă. Вăл вăхăтра шкулта Л.И. Артемьева, Е.М. Любимова, А.П. Петров, Т.Р. Романова, В.С. Львов, Е.Р. Анисимова, С.И. Мешакова учительсем тăрăшса ĕçленĕ. 1953 çултан тытăнса 1956 çулччен Конституци, географи, нимĕç чĕлхин тата физкультура учителĕ пулса Авенир Иванович Перлов вăй хунă.

1956 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнче Атапай шкулне пуçламăш шкул туса хунă. Унăн директорĕ пулма Никифор Степанович Ковалева çирĕплетнĕ. Вăл шкул коллективне 1970 çулччен ертсе пынă. Унпа пĕрлех вăл çулсенче Екатерина Романова тăрăшса ĕçленĕ.

Учительсем çитмен. Çавна май учительсен икшер класс та харăс вĕрентме тивнĕ. 1970-

йышăнусене хутшăнасси те пĕлтерĕшлĕ. Вĕсене эпир, кирлĕ пулсан, критиклеме те, сĕнӳсем тăратма та пултаратпăр. Çавра сĕтелсем, тĕрлĕ политика клубĕсен ларăвĕсем, пухусем те вырăнти çак вăхăтри пĕлтерĕшлĕ задачăсене татса парассипе дискусси центрĕсем пулса тăма тивĕç.

**– Ялăн паянхи ыйтăвĕсем патнех таврăнар пулĕ.**

– Ял хуçалăх предприятийĕсен епле мелпе аталанмалла-ха? Ял хуçалăх предприятийĕсен харпăрлăх формипаллă мар. Вĕсем хальхи рынок условийĕсенче йĕркеллĕ ĕçлеме пултараймаççĕ. Çул ăçталла – панкрутлăх патне е промышленность предприятийĕсенчи пек акционерсен обществисене йĕркелесси пирки шутлама тивет?

Пирĕншĕн çакă паллă: ĕç



çыннине улталама юрамасть, сахал-и, нумай-и, анчах та кашни кооператив членĕ, вăл шутра пенсири те, хăйĕн пурлăх пайне палăртнă хута алла илме пултартăр. Малашне унпа мĕн тăвасси – унăн ирĕкĕ.

Халăхран килекен ытти ыйтусем те сахал мар. Шкулсенче вĕренекенсен тата ача сачĕсене çӳрекенсен шучĕ чакнă май ку учрежденисене хупас ыйту çивĕч тăрать. Купна пĕрлех эпир çавна та палăртмасăр тăма пултараймастпăр: ялта шкул та, ача сачĕ те пулмасан çамрăк çемьесем унта тĕпленсе пурăнма тытăнасси иккĕленӳллĕ. Ку ялта вара çынсен шучĕ те чакса пырĕ. Паянхи тĕп задача – ку учрежденисене, вĕсенче ĕçлекенсене пулас ăрусем валли сыхласа хăварасси.

Культура учрежденийĕсем тĕлĕшпе те ыйтусем çук мар. Вĕсем рынок условийĕсенче мĕнле аталанмалла-ха? Тĕрĕссипе вĕсен ĕçĕ-хĕлĕнче юлашки çулсенче палăрăмлă улшăнусем пулсах та иртмен. Çав ташă каçĕсемех, çав пултарулăх коллективĕсемех. Харпăрлăх форми те улшăнман. Вĕсем пурте муниципаллă учрежденисем. Уйрăм çын харпăрлăхĕнчи çакăн пек учрежденисем, арендăна илнисем те, хальлĕхе çук. Ялсенче вара малтанхи пекех туйсем тума, юбилейсем уявлама вырăн çук.

Пĕтĕм çĕр-шывĕпех коррупципе кĕрешесси анлă сарăлнă. Апла пулин те ку пулăм вырăнти шайра та çук мар. Ытларах чухне курмăш пулма тăрăшатпăр, шарламастпăр.

Пирĕн ума лартнă задача вăл – паянхи пур ыйтусене те татса пама хутшăнасси. Ку енĕпе хамăрăн пур майсемпе те усă курмалла.

Пирĕн халĕ районта обществăлла йышăну пӳлĕмĕ пур. Умри ыйтусене татса парассипе те майсем ытларах пулĕç тесе шутлатăп. Малашне «Единая Россия» парти ретĕнче тăракан тĕрлĕ шайри депутатсемпе тĕл пулусем тăтăшах ирттерме планлатпăр. Купна пĕрлех тĕрлĕрен проблемăсемпе тĕл пулусемпе дискуссисем те пулĕç.

**– Альберт Николаевич, малашнехи ĕçре сире ăнăçу кăна суннă пулăттăм.**

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

Атапай шкулĕ 110 çул тултарчĕ

# Чăннипех пĕлӳсен çăл куçĕ

Çак кунсенче Атапайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул хăйĕн 110 çулхи юбилейне паллă турĕ. Савăнăçлă уява хисеплĕ хăнасем – И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕн филологи факультечĕн деканĕ Е.А. Андреева, попечительсен канашĕн председателĕ Ю.И. Ковалев, П.Н. Вязов спонсор, ветеран-учительсем, çак шкултан тĕрлĕ çулсенче вĕрентнисем килсе çитрĕç.

Çавна та каласа хăвармалла. П.Н. Вязов спонсор пулăшнипе шкул вĕренекенсем валли пĕр пек форма 70 пин тенкĕлĕх туянма пултарнă. В. Егорова парнисене çĕнсе илессишĕн ирттерекен районти çăмăл атлетика кросĕнче шкулта вĕренекенсен команди 1-мĕш вырăн, район хаçачĕн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттерекен ăмăртура 3-мĕш вырăн йышăннă. В.И. Вязов вара шкулта вĕренекенсене тӳлевсĕрех 56 пин тенкĕлĕх страхланă.

Шкулта 11 учитель вăй хурать. Пурте вĕсем ятарлă аслă пĕлӳ илнĕ, вăхăтра аттестаци тăраççĕ, квалификацие ӳстермелли курссене çӳреççĕ, районти семинарсене, шкулти методпĕрлешӳсен ĕçне хутшăнаççĕ. Опытпа паллашас тĕллевпе ытти шкулсене тухса çӳресси те йăлана кĕнĕ.

Шкулти учительсенчен пĕри – РФ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, 3 учителе – А.С. Герасимована, Т.Б. Вязована тата С.Г. Вязована – Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотине панă, тепĕр виççĕн – А.Н. Иванова, Ю.Г. Скворцов тата В.Б. Васильева – Чăваш Республикин Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотисене тивĕçнĕ, 3 учителе район администрацийĕн, 4 учителе район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн Хисеп грамотисене панă.

**Историрен.**

Малтанхи вăхăтра ачасем ялсенчи чиркӳпе прихут шкулĕсенче кăна вĕренме пултарнă. Чухăнсен ачисем унта вĕренме çӳреме майсем сахалрах пулнă. Атапай ачисем 1898 çултан тытăнса хурал пӳртĕнче вĕреннĕ. Ку çурт Николай Вязов хуçалăхĕнче пулнă. Çурчĕ пысăк пулман, сивĕ пулнă, çутă çитмен. Пĕр чӳрече кăна пулнă. Шкулта вĕренес текенсен шучĕ вара ӳссе пынă. Ялта пурăнакансем çавна май шкулăн çĕнĕ çуртне тума йышăннă.

Çĕнĕ шкул çуртне тума вырăн тупассипе Сентимĕр ялĕнче пурăнакан Петек тимленĕ. Малтанах шкул пулмалли вырăна Атапай ялĕ патĕнче Николай Замков хуçалăхĕ хыçĕнче палăртнă. Петек вара шкула хальхи вырăнта çĕклесси пирки çине тăнă. Шкул çуртне тума Хыркасси ялĕнчи Яшмулкин ертсе пыракан бригада килĕшнĕ.

Атапайри пуçламăш шкула 1902 çулта туса лартнă. Вăл чăвашсене çутта кăлараканĕ И.Я. Яковлев пулăшнипе туса лартнă 500 шкултан пĕри пулнă. Шкула тума тата ăна тытса тăма укçа-тенкĕне уес çĕр управи уйăрнă.

Шкулта пĕрремĕш занятисем 1904 çулта тытăннă. Çĕнĕ шкула вĕренме пĕрремĕш класа Феодосия Гавриловна Вязова та пынă. Çĕнĕ шкулăн пĕрремĕш учителĕ Хуракасси ялĕнчи Евгений Румянцев пулнă. Унăн мăшăрĕ вара Шурча ялĕнчи вырăс. Е. Румянцев нумаях вĕрентеймен, 3 çултан çĕре кĕнĕ.

Е. Румянцев хыççăн 1907 çултан тытăнса учитель пулса учительсен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă Василий Алексеевич Алексеев ĕçлеме тытăннă. Вăл ертсе пынипе 1910 çулта сад, картиш йĕри-тавра чăрăшсем лартса хăварнă. Ку йывăççем халĕ те шкул территорине илем кӳреççĕ.

Василий Алексеевич Турра ĕненекен çын пулнă. Служба кунĕсенче вăл вырсарни кунсенче Оринти чиркӳ хорĕнче юрланă. Атапай ялĕ Оринин прихутне кĕнĕ, çавăнпа та шкула куллен Весновский пуп пырса çӳренĕ. Василий Алексеевич Атапай шкулĕнче 1907 çултан тытăнса 1917 çулччен вĕрентнĕ, революци хыççăн кунтан тухса кайнă.

1918 çултан 1927 çулччен Атапай шкулĕнче ертӳçĕре Мулкачкассинчи пуп пулнă Алексей Михайлович Михайлов ĕçленĕ. Çирĕп характерлă пулнă. Çав шутра вĕренекенсемпе те. Кайран ăна вĕренекенсем мĕшĕ çулсенче кунта ĕçлеме Клавдия Дмитриевна Андреева килет. Вĕренекенсем ышланаççĕ. Çапла вара учительсем те нумайрах кирлĕ пулни сисĕнме тытăнать. Клавдия Дмитриевнапа пĕрлех шкулта Римма Мефодьевна Баркова та ĕçлеме тытăннă.

1970 çулта Атапай шкулĕнчен сакăр çул вĕренмелли шкул туса хунă. Директор пулма Иван Викторович Тимофеева çирĕплетнĕ. Пур енĕпе те аталаннă пултаруллă учитель пулнă вăл. Çамрăк учительсене пулăшасситчен нихăçан та пăрăнса тăман, вĕсен пуçарулăхне хаклама пĕлнĕ.

Тепĕр вăхăт иртсен сивĕсене пула ку çуртра аслă классенче вĕренекенсене вĕрентме йышăннă. 1974 – 1975 çулсенче шкулăн çĕнĕ çурчĕ çĕкленнĕ. Çуртăн пĕр пайне столовăй валли, тепĕр пайне физика кабинечĕ валли уйăрнă.

Иван Викторович хыççăн Геннадий Иванович Хлебникова шкул директорĕ пулма лартаççĕ. Унччен вăл завучра тăрăшнă. Дисциплинăллă, ыттисенчен çирĕп ыйтакан директор пулнă. Вăл ĕçленĕ чухне пĕтĕм документаци çирĕп йĕркеллĕ пулнă. Хальхи вăхăтра Геннадий Иванович Ярапайкассинчи вăтам шкулта ĕçлет. Ку çулсенче завуч пулса Нина Николаевна Егорова ĕçленĕ.

Г.И. Хлебников хыççăн директор должноçне Станислав Порфирьевич Григорьев йышăннă. Çулталăк хушши ĕçленĕ вăл унта.

1988 – 1991 çулсенче директорта Юрий Панфилович Степанов, 1991 – 1998 çулсенче Юрий Георгиевич Скворцов ĕçленĕ.

1997 çулхи ноябрь уйăхĕнче район администрацийĕн ун чухнехи пуçлăхĕ Валерий Иванович Вязов ертсе пынипе ялти клуб сывăхĕнче шкулăн çĕнĕ çуртне тума тытăннă. 1998 çулхи февральтенпе директорăн тата унăн çумĕн ĕçĕсене Татьяна Борисовна Вязова туса пырать. Чăннипех те пултаруллă хĕрарăм вăл. Шкул ĕç-хĕлне пур енĕпе те пĕлсе ертсе пырать. Вăл ертсе пынипе шкул коллективĕ пĕр çемьене татах тачăрах пĕрлешрĕ.

**А. ИВАНОВА,**
**шкул вожатăйĕ.**